**Ача чухне атте вăрçсассăн…**

Ача чухне атте вăрçсассăн
Хуллен лăпкарĕ те анне, —
Эп тартăм нимĕн ăнланмасăр,
Киле эп кĕтĕм ирхине.

Йăмра çинчи курак кил-йышĕ
Силленчĕ сивĕ çил çинче.
Вăрçнишĕн мар, ачашланишĕн
Эп йĕтĕм пӳрт кĕтессинче...

Çапла, калавăм ман хавассăр...
Анчах — илтетни эс ăна?
Эп сан куçусене курмасăр
Туятăп — эс сăнан мана.

Итле эппин: эп улталанă,
Анчах — хама çеç, сана мар!
Мана юратнă май пуçланă
Эс çынсене те юратма.

Эп пур — кама мĕскер калайăп,
Кама, мĕнле тивĕçпеле

Канаш парайӑп, айӑплайӑп
Ытти ҫынсемпеле пӗрле?..

Ҫил витӗр вӗҫнӗ пек кӗрлеҫҫӗ
Ват йӑмрасем пуҫ тӑрринче...
Хуралнӑ ҫулҫӑсем чӗтреҫҫӗ
Сан мамӑк тутӑру ҫинче.

Каллех карлать курак кил-йышӗ.
Хӑҫанччӗ вӑл — эп ҫил ҫинче
Вӑрҫнишӗн мар, ачашланишӗн
Йӗрсеттӗм пӳрт кӗтессинче?..

1954

*Айхи, Г. «Ача чухне атте вӑрҫсассӑн…» : [сӑвӑ] // Айхи, Г. Сӑвӑсемпе поэмӑсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 27.*